27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
28
ЭРНЕКУН
84(6579) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1944 çулхи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ЧĔНСЕ КАЛАНИСЕМ

1. Сывă пултăр МАЙАН 1-мĕшĕ — ĕççыннисен кĕрешӳри вăйĕсене пăхса тухмалли кун! Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем, фашистла нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкасшăн кĕрешӳре пĕрлешĕр!

2. Гитлеровецсен Европăри ыхланă «çĕнĕ йĕрки» тĕп пултăр! Темиçе çĕр миллион ĕççыннине вăрçă вутне кĕртнĕ юнлă пусмăрçăсене — фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене вилĕм!

3. Пирĕн хуласене ялсене çаратса, аркатса пĕтернĕшĕн, хĕрарăмсемпе ачасене мăшкăлланăшăн, совет çыннисене вĕлернĕшĕн тата нимĕç чурилăхне хăваласа кайнăшăн нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсене пĕтерсе тăкса тавăрăр!

4. Фашистла ирсĕрсене хамăрăн Тăван çĕршывран ăнăçлă хăваласа кăларакан аслă совет халăхĕ, унăн геройлă Хĕрлĕ Çарĕпе паттăр Тинĕс-Çар Флочĕ сывă пулчăр!

5. Этемлĕхĕн хаяр тăшманĕсене — фашистла нимĕç захватчикĕсене — Англипе Совет Союзĕн тата Америкăн боевой союзĕ çĕнтересси сывă пултăр!

6. Англипе Америка авиацийĕн паттăр летчикĕсем, фашистла Германи вăрçă объекчĕсене пыра-пыра çапакансем, салам!

Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен фашистла пиратсене хирĕç кĕрешекен хăюллă моряксене салам!

7. Югославн патриочĕсем! Эсир хăвăрăн Тăван çĕршывăр ирĕклĕхĕшĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешни Европăри пусмăрланă халăхсемшĕн тĕслĕх пулса тăрать. Фашистла захватчиксене хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешекен Югославн геройлă халăхĕ тата унăн халăх ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен паттăр çарĕ сывă пулчăр!

8. Польша, Чехословаки, Греци, Франци, Бельги, Голланди, Дани, Норвеги патриочĕсем! Хăвăр фашистла чуралăхран ирĕке кăларассишĕн кĕрешме çĕкленĕр! Гитлерла тиранн тĕп пултăр!

9. Пусмăрлăха кĕрсе ӳкнĕ Тăван славян халăхĕсем! Славян халăхĕсен вилĕмлĕ тăшманĕсене пусмăрçăсене — нимĕçсене — хирĕç пыракан халăх кĕрешĕвĕн çулăмне анлăрах чĕртсе ярăр! Хăвăра ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çара хыçланă тăшмана çĕмĕрсе тăкмашкăн мĕнпур вăйпа пулăшăр!

10. Пĕрлехи тăшман — фашистла пусмăрçăсене хирĕç Совет Союзĕн Германи фронтĕнче алла хĕçпăшал тытса геройлă çапăçакан Польшăн ССР Союзĕнчи армийĕн, Чехословаки бригадин, Югославн батальонĕн салтакĕсене офицерĕсене, Франци «Нормандия» ятлă авиаци часĕн летчикĕсене боевой салам!

11. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем! Хăвăрăн çапăçури мастерлăха ывăнма пĕлмесĕр ӳстерсе пырăр, хамăрăн питех те çапла вăрçă техникине лайăх усă курăр, тăшман çарĕсене тĕп-йĕрĕпех аркатса тăкинчен çĕмĕрсе пырăр!

12. Хĕрлĕ Çарăн пехотинецĕсем! Тăшман оборонине пĕлсе çапăçнипе çĕнтерĕр, наступлени ăнăçăвĕсене çирĕплетсе малалла аталантарса пырăр, тăшман çарĕсене хăваласа пырса пĕтере тăкăр, нимĕç захватчикĕсене çавăрса ил-иле пĕтерсе тăкăр! Сывă пулчăр мухтавлă совет пехотинецĕсем!

13. Хĕрлĕ Çарăн артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем! Хăватлă вут-çулăм тăкса, тăшман укрепленийĕсене аркатăр, унăн оборонине çĕмĕрĕр! Тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе вăрçă техникине пĕтере-пĕтере тăкăр! Пехотăпа тата танксемпе пĕрле çапăçассине лайăхлатса пырăр! Артиллери вучĕ тĕл пырса тивессине ӳстерĕр! Сывă пулчăр Хĕрлĕ Çарăн артиллерисчĕсемпе минометчикĕсем!

14. Хĕрлĕ Çарăн танкисчĕсем! Тăшмана аркатса, хыççăнах хăваласа пырăр! Аста та хăюллă маневр туса, тăшман тылне çĕмĕре-çĕмĕре кĕрĕр, тăшман çарĕсем чакмалли çулсене татăр, нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе пырăр! Сывă пулчăр совет танкисчĕсем!

15. Совет летчикĕсем — пирĕн Тăван çĕршывăн сокелĕсем! Тăшмана çĕр çинче те, сывлăшра та, тинĕсре те пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе пырăр! Сывă пулчăр совет летчикĕсем!

16. Тинĕс-Çар флочĕн краснофлотецĕсемпе офицерĕсем! Тăшманăн тинĕсри коммуникацийĕсене вăйлăрах пыра-пыра çапăр! Тăшман карапĕсемпе транспорчĕсене тинĕс тĕпнелле ярăр! Хамăр тинĕссене фашистла пиратсенчен тасатăр! Гитлерла захватчиксене пĕр шеллемесĕр вĕлере-вĕлере пĕтерĕр! Сывă пулчăр советăн вăрçă морякĕсем!

17. Хĕрлĕ Çарăн кавалерисчĕсем! Тăшман çарĕсене вирлĕн хăваласа пырăр, тăшман çарĕсен речĕсене хăюллăн та татăклăн çĕмĕре-çĕмĕре кĕрĕр, тăшман флангĕсене çавăра-çавăра илĕр, тăшман тылĕнче хăюллă рейдсем тăвăр, фашистла нимĕç çĕлен-калтисене çавăрса илсе, пĕтере-пĕтере тăкăр! Сывă пулчăр совет юланутçисем!

18. Хĕрлĕ Çарăн разведчикĕсем! Хĕрлĕ Çарăн куçĕсемпе хăлхисем вырăнĕнче пулăр! Тăшманăн шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене туйса илĕр! Тăшман вырнаçнă çĕре хăюллăн кĕре-кĕре кайăр, тăшман вăйĕсем ăçта вырнаçнине вăхăтра шыраса тупăр, тăшмана ăнăçлă çĕмĕрме хамăрăн войскăсене пулăшăр! Сывă пулчăр совет разведчикĕсем!

19. Хĕрлĕ Çарăн связисчĕсем! Лайăх çыхăну çапăçăва ертсе пымалли питех те кирлĕ услови пулса тăнине асра тытăр. Хĕрлĕ Çарти çыхăну ĕçне пур майсемпе те лайăхлатса пырăр, Хĕрлĕ Çара ăнăçлă операцисем тума пулăшăр! Сывă пулчăр совет связисчĕсем!

20. Инженерла çарсен боецĕсемпе командирĕсем! Хамăрăн çарсене тăшман укрепленийĕсене штурмлама, шывсем урлă каçма, мина хирĕсене çĕнтерме, чăрмавлă вырăнсемпе иртме, наступлени ăнăçăвĕсене çирĕплетсе, малалла аталантарса пыма пур майсемпе те пулăшса тăрăр! Сывă пулчăр пирĕн мухтавлă саперсемпе минерсем!

21. Сывă пулчăр пирĕн мухтавлă пограничниксем, совет çĕршывĕн чиккисене шанчăклăн хӳтĕлекенсем!

22. Хĕрлĕ Çарăн медицина работникĕсем! Врачсем, фельдшерсем, медицина сестрисем, санитарсемпе санитаркăсем! Аманнă совет воинĕсен пурнăçне çăлса хăварассишĕн тата вĕсене строя таврассишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешĕр! Сывă пулчăр Хĕрлĕ Çарăн медицина работникĕсем!

23. Çар тылĕнчи работниксем! Хĕрлĕ Çарăн автомобилисчĕсем тата çулйĕр работникĕсем! Пирĕн войскăсем ăнăçлă наступлени тăвасси сирĕнтен нумай килет. Хĕрлĕ Çара валли вăрçă техники, боеприпассем, тумтир тата апат-çимĕç вăхăтра турттарса парăр! Сывă пулчăр войскăсен тылĕнчи работниксем, Хĕрлĕ Çарăн автомобилисчĕсем тата çулйĕр работникĕсем!

24. Паттăр партизансемпе партизанкăсем! Наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара пулăшассине пур майсемпе те вăйлатса пырăр, нимĕçсем хăйсен çĕнĕ вăйĕсене фронт патне куçарассине путлантарса лартăр, совет çыннисене нимĕçсем пĕтерсе тăкассинчен тата вĕсене Германие каторгăна хăваласа каяссинчен хăтарăр, фашистла нимĕç ирсĕрĕсене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пырăр! Сывă пулчăр советăн мухтавлă партизанĕсемпе партизанкисем!

25. Пирĕн Тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсене — Совет Союзĕн Геройĕсемпе Социализмлă Ĕç Геройĕсене мухтав!

26. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшасси мĕнпур совет патриочĕсен таса тивĕçĕ пулса тăрать. Тăван çĕршыва ирĕке кăларакансен çемьисем вĕсемшĕн пĕтĕм халăх тимлĕн тăрăшнине туйса тăччăр!

27. Хĕçпăшалсемпе боеприпассем туса хатĕрлекен предприятисенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хĕрлĕ Çар валли туса кăларакан хĕçпăшалсен пахалăхне пĕр вĕçĕмсĕр лайăхлатса пырăр, тупăсем, минометсем, пулеметсем, автоматсем, винтовкăсем, снарядсем, патронсем тата минăсем туса кăларассине ӳстерĕр! Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ тума!

28. Танксем тăвакан заводсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хĕрлĕ Çара лайăх машинăсем ытларах туса парăр! Лайăх танксем мĕн чухлĕ нумайрах пулĕç — тăшмана çĕнтерес сехет çавăн чухлĕ çывăхрах пулĕ!

29. Авиаци завочĕсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Совет самолечĕсене ывăнма пĕлмесĕр лайăхлатса пырăр! Хĕрлĕ Çар валли истребительсем, штурмовиксем, бомбардировщиксем ытларах туса парăр!

30. Нефть промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Нефть кăларассине ӳстерĕр! фронтпа çĕршыв валли ытларах горючи парар!

31. Çĕркăмрăк промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Транспорт тата фабрикăсемпе заводсем йĕркеллĕ ĕçлесси сирĕнтен килет. Кăмрăк кăларассине ӳстерĕр, фронтпа тыла топливо кирлĕ чухлех парса тăрăр!

32. Металлурги завочĕсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Танксем, самолетсем, тупăсем, пулеметсем, снарядсем тума металл ытларах парса тăрăр!

33. Моторсем тăвакан промышленноçăн рабочийĕсемпе работницисем, инженерĕсемпе техникĕсем! Кучухнехи вăрçă— моторсен вăрçи. Моторсем туса кăларассине вăйлатса пырăр, самолетсем, танксем, автомобильсем, карапсем валли тăвакан моторсен хăватне ӳстерĕр!

34. Станоксем тăвакан заводсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Станоксем туса кăларни — пирĕн çĕршыва техникăпа хĕçпăшаллантармалли питех те кирлĕ база пулса тăнине асра тытăр. Станоксем туса кăларассине пĕр вĕçĕмсĕр ӳстерсе пырăр! Çĕнĕрен тăвакан тата юсаса йĕркелекен заводсене оборудованисем хăвăртрах парса çитерме пулăшăр!

35. Электростанцисенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Ӳссе пыракан оборона промышленноçне пĕр чарăнусăр ĕçлеттермелле тăвăр! Фашистла нимĕç варварĕсем ишсе аркатнă электростанцисене хăвăртрах юсаса йĕркелĕр! Энергетика вăй-хăватне ӳстерсе пырăр!

36. Çăмăл тата пир-авăр промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хĕрлĕ Çар валли тумтирсем тата халăх валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине кунран-кун ӳстерсе пырăр!

37. Вырăнти промышленноçри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Вырăнти ресурссемпе усă курас ĕçре пуçарулăрах пулăр, халăхпа Хĕрлĕ Çар валли таварсем туса кăларассине ӳстерĕр!

38. Апат-çимĕç промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Çарпа халăх валли апат-çимĕç продукчĕсем туса кăларассине ӳстерĕр!

39. Совет чугун çулĕн работникĕсем! Вăя шеллемесĕр тата тĕрĕс ĕçлесе, Хĕрлĕ Çара ăнăçлă наступлени тума пулăшăр! Войскăсем, çар тата халăх хуçалăхĕн грузĕсене турттарса тăракан поездсене хăвăрт çӳретессине организацилĕр! Чугун çулсем çинче çар дисциплинине пĕр ывăнмасăр тĕреклетсе пырăр! Нимĕçсем аркатнă чугун çулсен линийĕсене, кĕперсемпе çурт-йĕрсене, шыв парса тăрас ĕçе тата çыхăнăва хăвăртрах юсаса йĕркелĕр!

40. Шыв тата тинĕс флочĕн работникĕсем! Флота тата портсемпе пристаньсене пĕр чарăнусăр, тĕрĕс ĕçлемелле тăвăр! Фронтпа тыл валли грузсем хăвăртрах турттарса тăрăр! Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă бассейнсенче тинĕспе шыв флотне юсаса йĕркелĕр!

41. Колхозниксемпе колхозницăсем, агрономсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницăсем! Çуракине кăтарулă туса ирттерер, колхозсемпе совхозсенче малта тăракан агротехникăна пурнăçа кĕртсе пырар! Тырпул тухăçлăхне ӳстерер, пĕрчĕллĕ тырăсем тата ялхуçалăхĕн ытти культурисене ытларах пухса илер! Фронтпа çĕршыва — апат-çимĕç, промышленноçа — чĕртавар ытларах туса парар! Сывă пулчăр совет хресчекĕсем!

42. Трактористсем, комбайнерсем, МТС-семпе совхозсенчи механиксем! Ударлă ĕçлесе машинăсемпе тракторсен паркĕн пĕтĕм вăйĕпе ялхуçалăх ĕçĕсенче туллин усă курмалла тăвар! Уйхирсенчи ĕçсене лайăх пахалăхпа туса ирттерер!

43. Колхозниксемпе колхозницăсем, совхозсенчи рабочисемпе работницăсем, зоотехниксемпе ветеринарсем! Выльăх-чĕрлĕх хисепне татах ӳстерер, çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăварар! Выльăх-чĕрлĕхсен продуктивноçне хăпартар! Хĕрлĕ Çарпа çĕршыв валли выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парса тăрассине ӳстерер!

44. Совет интеллигенцийĕ! Инженерсемпе техниксем, агрономсем, учительсем, врачсем, наукăпа искусство тата литература работникĕсем! Совет предприятийĕсемпе учрежденийĕсенчи служащисем! Рабочисемпе колхозниксене хамăр халăх хуçалăхне татах çĕклеме пулăшăр, совет наукипе культурине малалла аталантарса пырăр! Сывă пултăр совет интеллигенцийĕ!

45. Тăшмантан ирĕке кăларнă районсенчи ĕççыннисем! Гитлерла вăрă-хурахсем аркатнă хуласемпе ялсене, промышленноçа, транспорта, çыхăнăва, ялхуçалăхне, культура тата пурнăçпа йăла учрежденийĕсене хăвăртрах юсаса йĕркелĕр! Хамăра ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çара пулăшассине кунран-кун вăйлатса пырăр!

46. Совет хĕрарăмĕсем! Производство специальноçĕсене вĕренсе алла илĕр, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пырăр, сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран хӳтĕленес ĕçе, санитарипе çыхăну ĕçне вĕренĕр. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешме пĕтĕм вăя парар! Сывă пулчăр совет хĕрарăмĕсем!

47. Совет çамрăкĕсем! Фронта пулăшас тĕлĕшпе вăя шеллемесĕр ĕçлĕр, производство техникине вĕренсе алла илĕр, çар ĕçне вĕренĕр, ĕç дисциплинин лайăх тĕслĕхĕсене кăтартăр! Сывă пулчăр совет çамрăкĕсем!

48. Коммунистсемпе комсомолецсем! Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешекенсен малти речĕсенче пулăр!

49. Сывă пултăр вăйлă та хăватлă Совет Союзĕ, пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕн, телейлĕхĕн тата мухтавлăхĕн шанчăклă тĕрекĕ! Сывă пултăр Совет çĕршывĕ!

50. Сывă пултăр пирĕн çĕршыври халăхсен никам аркатайми туслăхĕ!

51. Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, Ленин — Сталин партийĕ — фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕве хавхалантарса, организацилесе пыраканĕ!

52. Ленин ялавĕпе, Сталин ертсе пынипе — малалла, нимĕç оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкма тата вĕсене пирĕн Тăван çĕршывран хăваласа кăларма!

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 25-мĕшĕнче фронтсенче пала улшăнусемех пулман.

Апрелĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 14 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллери тăшманăн 50 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ РЕЗЕКНЕПЕ ГУЛБЕНЕ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Апрелĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Латви ССР-ĕнчи РЕЗЕКНЕПЕ ГУЛБЕНЕ чугун çул узелĕсенче капланнă тăшманăн çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Вара пушарсем тухнă, вагонсем, платформăсем тата цистернăсем çуннă. Резекне чугун çул узелĕнче те, Гулбене чугун çул узелĕнче те пушарсем вăхăтĕнче вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

АПРЕЛĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 26-мĕшĕнче фронтсенче пала улшăнусемех пулман.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 52 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллери тăшманăн 79 самолетне персе ӳкернĕ, 33 самолетне аэродромсем çинче пĕтерсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

СЕВАСТОПОЛЬ ПОРТĔНЧЕ ТАТА ХУРА ТИНĔСРЕ ТĂШМАН СУДНИСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Апрелĕн 25-мĕшĕнче тата апрелĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци тăшманăн Севастополь портĕнчи суднисемпе çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Кăнтăрти бухтăра тăракан транспорчĕсемпе баржăсене тата Казачья бухтинче тăракан транспортне темиçе бомба тӳрех пырса тивни палăрнă пулнă. Портăн тĕрлĕ пайĕсенче пушарсем тухнă, взрывсем нумай пулнă, çав взрывсенчен иккĕшĕ ытла та вăйлă пулнă.

Хура тинĕсре пирĕн летчиксем тăшман транспорчĕсене пыра-пыра çапнă. Хура тинĕс флочĕн авиацийĕпе карапĕсем активлăн кĕрешнине пула иртнĕ талăк хушшинче тăшманăн пĕтĕмпе 13.000 тоннăна çити таякан 5 транспортне, десант баржине тата хуралта çӳрекен 2 карапне шыва путарнă. Тăшманăн ытти 2 транспортне вĕсен çывăхĕнчех çурăлса кайнă бомбăсем тата пирĕн самолетсем тупăсемпе, пулеметсемпе персе вăйлă сиенленĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БАРЕНЦ ТИНĔСĔНЧЕ ТĂШМАН КАРАВАНĔН ХУРАЛНЕ АРКАТСА ТĂКНИ

Çак кунсенче Баренц тинĕсĕнче пирĕн сывлăшри разведка нимĕç транспорчĕсен ыйăк ушкăнне асăрханă, çав транспортсене боевой карапсем, катерсем тата истребительсем хӳтĕлесе пынă. Пирĕн авиаци тăшман суднисене умлăн-хыçлăн пилĕк хут вĕçсе пырса штурмланă тата бомбăсемпе торпедăсем пăрахнă. Пĕлĕтсем аялтах шунине тата зенитлăй артиллери вăйлă пенине пăхмасăрах, совет летчикĕсем тăшман карапĕсем патне вĕçсе тухнă. Хăюллăн пыра-пыра çапса, пирĕн летчиксем нимĕçсен пурĕ пĕрле 20.000 тоннăна çити таякан 4 транспортне шыва путарнă. Çавăн пекех тата хурал карапне хурал катерне те шыва путарнă. Тăшманăн 2 транспортне, хурал карапне тата пĕр миноносецне вăйлă сиенленĕ.

Çав районра пулса иртнĕ сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 10 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн пĕр чаçăн танкисчĕсем, Бочковский капитан ертсе пынипе, тăшмана вирлĕн атакăланă. Гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкса, танкистсем, пĕр паха çӳллĕ вырăна тытса илнĕ. Тепĕр районта красноармеец Андреев ертсе пыракан 5 разведчик боевой задание пурнăçланă чухне 25 нимĕçе тĕл пулнă. Пирĕн боецсем тăшмана атакăланă та нимĕçсен 5 салтакĕпе пĕр офицерне вĕлернĕ. Ытти гитлеровецсем тарнă.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронтăн пĕр участокĕнче тăшман пехотин пĕр полкĕпе танкĕсем пирĕн çарсене атакăланă. Нимĕçсем пирĕн çав районта артиллери тата персе тăмалли ытти хатĕрсем нумай пулнипе пĕлмен. Гитлеровецсем вут-çулăм миххине кĕрсе ӳкнĕ те пĕр йĕркесĕр каялла чакнă. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 800 вилли ытла тата аманнă салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çынна çити выртса юлнă. Нимĕçсен 20 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пĕр чаçăн боецĕсем тăшманăн вирçĕ атакине сирсе янă, гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Румын салтакĕсен пĕр роти Хĕрлĕ Çар енне куçнă.

* * *

Çак кунсенче пирĕн авиаци Баренц тинĕсĕнче тăшман караванĕн хуралне аркатса тăкнă. Çав çапăçура летчик Катунин капитан герой вилĕмĕпе вилнĕ. Унăн самолетне зенитлăй артиллери сиенленĕ пулнă. Катунин юлташ хăйĕн çунакан самолетне вара нимĕçсен транспорчĕ çине ӳкернĕ.

* * *

Могилев облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ апрелĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшманăн çирĕплетнĕ пунктне тапăннă. Партизансем, вирлĕн атакăласа, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та çав çирĕплетнĕ пункта тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 100 вилли ытла выртса юлнă. Совет патриочĕсем казармăсене çĕмĕрнĕ, 4 тупă, 8 танк, 33 автомашина пĕтерсе тăкнă, тăшманăн темиçе складне сирпĕнтерсе янă. Белосток облаçĕнче кĕрешекен партизансен «Боевой» ятлă отрячĕ икĕ эрне хушшинче нимĕçсен 7 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă, 7 паровоз, танксем тиенĕ 9 платформа тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тиенĕ темиçе вунă вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра Данило Албанирен Совет Союзĕпе Германи фронтне нумаях пулмасть килнĕ нимĕç дивизийĕсен темиçе салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Нимĕçсен 361-мĕш пехотăй дивизийĕнчи 361-мĕш резерв батальонĕн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ штабс-ефрейтор Андреас Дрейфс çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи 1943 çулхи ноябрьпе декабрь уйăхĕсенче Данири Эсбьерг хулинче тунă. 1944 çулхи февраль уйăхĕнче, манерсем тунă хыççăн, пирĕн дивизи Çурçĕр тинĕсĕн Дани çыранне хуралласа тăчĕ. Салтаксем çав тинĕс хĕрринче вăрçă пĕтиччен пурăнма май килĕ тесе шутлатчĕç. Анчах та нимĕç çарĕсем Россиăра поражениесем тӳснине пула çак шанчăк пĕтсе ларчĕ. Март уйăхĕн варринче пирĕн дивизи кĕтмен çĕртен Данирен тухса кайрĕ. Çул çинче кăна эпир хамăр Хĕвелтухăç фронтне кайнине чухласа илтĕмĕр. Эпир рота командирĕнчен ыйтсан, вăл çапла каларĕ: вырăссем пирĕн фронта пĕр пите паха участокра татнă, çавăнпа та пире васкаса çав фронта ярассĕ, терĕ».

Нимĕçсен 100-мĕш çăмăл пехотăй дивизийĕнчи 227-мĕш полкăн 14-мĕш

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

М. И. КАЛИНИН.

Çураки кампанийĕ тĕлне

Пирĕн çĕршывăн кăнтăр пайĕнче çураки ĕçĕсем хĕрӳллĕн пыраççĕ. Кашни кунах вĕсем çурçĕр еннелле куçса пыраççĕ, çитес вăхăтрах, акă, пĕтĕм Совет Союзĕпех сарăлĕç.

Кăçал, Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсене пула, акмалли çĕрĕн лаптăкĕ чылаях пысăкланчĕ. Кăçал çуракине Украина пĕтĕмĕшпех тенĕ пекех хутшăнать. Кубань иккĕмĕш çуракине ирттерет ĕнтĕ. Совет Союзĕн кăнтăрти районĕсем пирĕн тырпул балансĕнче паха вырăн йышăнĕç тесе шутлама пулать. Анчах та çак пирĕн хĕвелтухăçĕнчи, вăта çĕрти тата çурçĕрти облаçсем çинче выртакан ответлăха нимĕн чухлĕ те пĕчĕклетмест. Вăрçă вăхăтĕнче çав облаçсем аван ĕçлерĕç, вĕсем питĕ пысăк ĕç турĕç, тесе калама пулать. Вĕсем правительствăна хамăр çара апат-çимĕç татти-сыпписĕр тата лайăх парса тăма, хулари халăха—çителĕклĕ парса тăма май пачĕç.

Халĕ, вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракинче, акакан лаптăка пысăклатассишĕн кăна мар, ăна иртнĕ çулхисенчен лайăхрах акса хăварассишĕн те пĕтĕм вăйпа тăрăшмалла. Колхозри хресченсем тарăшни тăшманпа кĕрешекен Хĕрлĕ Çарăн ĕçĕсемпе танлашмалла. Çавăнпа та ĕнтĕ Калинин облаçĕнчи «Красный путиловец» колхоз Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене тата агрономсене пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн çуракине лайăх ирттерме чĕнсе калани вăхăтлă та паха ĕç пулса тăрать. Колхозниксемпе колхозницăсем тата агрономсем çак чĕнĕве ăшă кăмăлпа йышăнса илĕç, вĕсене пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕç тесе шанатăп.

Хулари халăха коллективлă тата кашни уйрăм лартакан çĕрулми лаптăкне аслăлатмалла. Пирĕн Совет Союзĕнче пĕр хула та, пĕр поселок та коллективлă е уйрăм пахчасăр юлмалла мар. Хула халăхĕ ялхуçалăхĕнче ĕçлени питĕ паха ĕç пулнине кăçалхи çул лайăх кăтартса пачĕ. Çураки кампанине ирттерес ĕç—боевой ĕç, çарти пек ĕç, çавăнпа та ăна вăрçă вăхăтĕнчи пек ирттермелле.

(«Социалистическое Земледелие», 1944 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕ).

Куславкка комбиначĕ уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçларĕ

КУСЛАВККА, апрелĕн 25-мĕшĕ (ТЕЛЕГРАФПА). Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе хавхаланса, комбинат коллективĕ республикăри предприятисен коллективĕсен май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнчĕ.

Ăмăртура малти вырăна тухассишĕн кĕрешсе, коллектив март тата апрель уйăхĕсенче продукци туса кăлармалли государство планне 5 кун малтан—апрелĕн 25-мĕшĕнче пурнăçа кĕртрĕ.

Комбинат директорĕ ЭСКИН
Партбюро секретарĕ ПЕТРУЧЕНКО.

Выигрышсене тĕрĕслеççĕ

ВĂРНАР. Хапăс ялсоветĕнче ĕççыннисем заемсен выигрышĕсене тĕрĕслес ĕçе азан организациленĕ. Ку тĕлĕшпе почта уйрăмĕн начальникĕ Захарова, учительница Миронова юлташсем уйрăмах тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем икĕ кун хушшинче 100 колхозникĕн облигацийĕсене тĕрĕслерĕç. Çав шутран 7 облигаци выляса илнĕ.

В. КИРИЛЛОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Рудольф Генрих çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи Албанире тăратчĕ. Март уйăхĕнче пире Хĕвелтухăç фронтне куçарчĕç. Апрелĕн малтанхи кунĕсенче эпир Львова çитрĕмĕр. Командовани пирĕн дивизи умне çакăн пек задача лартрĕ: ытти соединенисемпе пĕрле Тарнополь патне кĕрсе каймалла та унта çавăрса илнĕ нимĕç гарнизонне ирĕке кăлармалла. Тем пекех тăрăшсан та, эпир çав хула патне тапса кĕреймерĕмĕр. Вырăссем пирĕн атакăсене сирсе ячĕç. Çав çапăçусенче пирĕн дивизи питĕ пысăк çухатусем тӳсрĕ».

* * *

Аяларах фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Житомир облаçĕнчи Малый Браталов ялĕнче тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Фашистла ирсĕрсем пирĕн яла шупă вырăн туса хучĕç. Çуртсене пурне те çунтарса ячĕç е ишсе пĕтерчĕç. Нимĕçсем пурăнмалли çуртсене çунтарса ячĕç çеç мар, вĕсем тата садпахчисенчи сырла йывăççисене те касса пĕтерчĕç. Вĕсем колхоз пурлăхĕпе колхозниксен пурлăхĕсене çаратса пĕтерчĕç. Вут тĕртсе çунтарнă чухне тата çаратнă вăхăтра гитлеровецсем çынсене йышлăн вĕлерчĕç. Нимĕç ирсĕрĕсем 1944 çулхи январьпе февраль уйăхĕсенче тата март уйăхĕн пуçламĕшĕнче 100 çынна ытла персе вĕлерчĕç. Фашистла çынвĕлерексем В. Демепик трактористка, Т. Тупальский комбайнера, М. Стрига бригадира тата ытти колхозниксене те вĕлерчĕç. Нимĕçсем оккупацилеччен пирĕн ялта 1.200 çын пурăннă, халĕ унта мĕн пурĕ те темиçе çын çеç тăрса юлнă. Çынсен пĕр пайне гитлеровецсем Германие каторгăна хăваласа кайрĕç, пуманĕшне асаплантарса персе вĕлерчĕç. Ытти халăха (унта пуринчен ытла хĕрарăмсемпе ачасем пулнă) нимĕçсем тăсла хăваласа кайрĕç».

Акт çине çаксем алă пуснă: Кузнецов полковник, Мутиция подполковник, Авраменко майор, Дубинов майор тата колхозниксем—И. Юрчик, И. Демусь, И. Остапчук, И. Шастун.

РЕСПУБЛИКĂРИ ПРЕДПРИЯТИСЕНЧЕ

Республикăри предприятисемпе учрежденисем май уявĕ умĕнхи ăмăртура пысăкран та пысăк çитĕнӳсем тăвассĕ. Промысла артелĕсем чылайĕшĕ апрель уйăхĕнчи производство планне срокчен пурнăçларĕç.

Куславккари промкомбинат коллективĕ апрелĕн 27-мĕшĕ тĕлне уйăхри задание пур тĕрлĕ продукци енĕпе те пурнăçларĕ. Çĕвĕ çĕлекен цех (бригадирĕ Портнов юлташ) уйăхри задание апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурнăçларĕ. Доманина, Комарова, Игнатьева, Петрова стахановкăсем заданиие тăтăшах 150—200 процент пултараççĕ.

— Тăван çĕршыв саванăçлă кунсене кĕтсе илчĕ. Хĕрлĕ Çар тăшмана сывлама памасăр хĕвеланăçнелле хăваласа пырать. Эпир те, кунта ĕçлекенсем, фронтовиксенчен юлмăпăр, фронтпа çĕршыв ыйĕнчи тивĕçе тимлĕн пурнăçлăпăр.—тессĕ комбинатра ĕçлекенсем.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри промкомбинат коллективĕ май уявĕ кунĕ тĕлне апрель уйăхĕнчи задание 130 процент чухлĕ пурнăçлама пулнă. Апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне комбинат уйăхри задание 100 процентпа пурнăçларĕ.

Колхозлă ялта вăйлă тырпулшăн ăмăрту хăватлăн сарăлса пырать

Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз Мускав облаçĕнчи Дмитров районĕнчи „Победа“ колхозпа ă м ă р т а т ь

Горький облаçĕнчи Каменск МТС-ĕн коллективĕ Вăрнар МТС-ĕ ăмăртăва чĕннине йышăннă

Кăçалхи апрелĕн 11-мĕшĕнче «Социалистическое земледелие» хаçатра пирĕн республикăри Вăрнар районĕнчи колхозсемпе МТС гектартан 100-шер пăт тырă туса илессишĕн мĕнле кĕрешнине кăтартакан материалсем пичетленсе тухнăччĕ.

Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз Мускав облаçĕнчи Дмитров районĕнчи «Победа» колхоза ăмăртăва чĕннĕччĕ. «Победа» колхоз вăйлă тухăçлă тырпул туса илнипе чапа тухнă.

Вăрнар МТС-ĕ Горький облаçĕнчи Каменск МТС-ĕн коллективне ăмăртăва чĕннĕ.

Мускав облаçĕнчи Дмитров районĕнчи «Победа» колхоз членĕсем тата Горький облаçĕнчи Каменск МТС-ĕн коллективĕ илнĕ обязательствăсем вăрнарсене кăçал хăйсем илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăça кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме хушаççĕ. Кунпа пĕрлех вĕсен обязательствисем пирĕн республикăри кашни колхозпа машинно-тракторнăй станцине çуракине кăтартуллăн туса ирттерессишĕн, вăйлă тырпул туса илессишĕн нихăçанхинчен те тăрăшарах ĕçлеме хушаççĕ.

Аяларахра «Победа» колхоз членĕсен тата Каменск МТС-ĕн коллективĕн ответлă телеграммисене пичетлетпĕр.

Чăваш АССР-ĕ, Вăрнар районĕ
Ленин орденлĕ, Сталин ячĕпе тăракан колхоз председательне А. ВАСЯНИНА
Колхоз агрономне Е. ЕРЛАКОВĂНА
Парторганизаци секретарьне М. АЛЕКСЕЕВА

«Социалистическое земледелие» хаçатра эсир пире кăçал вăйлă тухăçлă тырпул—çĕнтерӳ тырпулĕ туса илессишĕн ăмăртăва чĕннĕ çыру пичетленсе тухрĕ. Эпир ăна пысăк интереспа вуларăмăр.

Хамăр хушăра канашларăмăр та сирĕн чĕнĕве йышăнтăмăр. Социализмлă ăмăрту витĕмлĕрех пултăр тесе, унта колхозниксемпе колхозницăсем йышлăн хутшăнччăр тесе, эпир çийĕнчех аслă пуху туса ирттертĕмĕр. Çав пухура сирĕн çырăвăра сӳтсе яврăмăр. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем, пурте пĕр кăмăллă пулса, чĕнĕве йышăнса сирĕнпе ăмăртма шутларĕç.

Эсир тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкмашкăн боеприпассем çеç мар, ялхуçалăх продукчĕсем те нумай кирлĕ, тесе тĕрĕс çыратăр. Пирĕн колхозниксем государствăна тĕштырă, çĕрулми, пахча-çимĕç, сĕт-çу ытларах та ытларах парса тăма тăрăшаççĕ. Иртнĕ çул, сăмахран, эпир государствăна 18.900 пăт тĕштырă, çĕрулми тата пахча-çимĕç патăмăр.

Калинин облаçĕнчи Краснохолмски районри «Красный путиловец» ялхуçалăх артелĕн членĕсем чĕнсе каланине ответлесе, вăйлă тырпулшăн кĕрешме ăмăртăва хутшăнса, эпир çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1) кĕрхи тата çурхи тырăсем акнă пĕтĕм лаптăк çинче кашни гектартан 26-шар центнер тĕштырă пухса илмелле;

2) 3 гектар çинчи опытлă участокра кашни гектартан 75-шер центнер тулă, пĕр гектар çинчен 65 центнер ыраш пухса илмелле;

3) çĕрулми лартнă пĕтĕм лаптăкра кашни гектар пуçне 200-шер центнер çĕрулми, юткинсен 8 гектарлă участокĕнчен 400-шер центнер çĕрулми кăларса илмелле;

4) кашни гектартан 400-шер центнер купăста туса илмелле, 2 гектарлă участокра вара 700-шер центнер купăста туса илмелле.

Эпир мĕнле ĕçленине, мĕнле пурăннине, хамăр çине илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçланине курма тата пĕр-пĕрин опычĕпе паллашма çураки вĕçленнĕ хыççăн сире хамăр пата хăнана чĕнетпĕр.

Мускав облаçĕнчи Дмитров районĕнчи Ленин орденлĕ «Победа» колхозăн председателĕ И. ЕГОРОВ.
Колхоз агрономĕ Т. НЕДОСЕКИНА.
Бригадирсем: И. КОСТЫЛЕВ, М. ГРИЦАЮК, Г. БЕЛЯНИН.

Чăваш АССР-ĕ, Вăрнар районĕ
Вăрнар МТС директорне Ф. НИКОНОВА

КАМЕНСК, Горький облаçĕ. (Телеграфпа). Пирĕн коллектив Вăрнар МТС-ĕ 1944 çулта ăмăртăва чĕннине йышăнать.

Пирĕн обязательствăсем:

15 лаша вăйĕллĕ кашни тракторпа 500 гектар çинчи ĕçе тумалла;

тырпул тухăçлăхне ӳстермелли плана 10 процент ирттерсе пурнăçламалла;

октябрьччен натуроплата тӳлемелли çулталăкри плана пурнăça кĕртмелле;

горючие 5 процент перекетлемелле;

трактор ĕçĕсен хăйне ларакан хакне 10 процент йӳнетмелле.

В. МОКРОПОЛОВ,
Каменск МТС-ĕн директорĕ.

Çураки ĕçĕ сарăлсах пырать

КАЛИНИНО, апрелĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 38 колхоз ака ĕçĕсене пуçăнчĕç. Çуртырри акмалли вырăна 250 гектар сухаланă. 841 гектар çинчи кĕрхи калчасене апатлантарнă, 118 гектар çинчи калчасене кивĕ улăма тураса витнĕ. 220 гектар клевер акнă.

Уйрăм колхозсем çурхи тырăсене акма тытăнчĕç. «Броневик» колхоз 50 гектар, «Çуттаяла» колхоз 25 гектар сĕлĕ акрĕç, «Клевер» колхоз 18 гектар сĕлĕ тата тулă акрĕ. Паянхи кун тĕлне 255 гектар тырă акнă. Тырра пĕтĕмпе тенĕ пекех машинăсемпе акаççĕ. Анчах та «Первое мая», «Комсомолец» колхозсенче алăпа акма тытăннă, сухаласса та питĕ ăнăх сухаланă. Агротехникăна çакăн пек пăсассине çийĕнчех тӳрлетнĕ.

«Победа», «Ким», «Правда» колхозсенче те тăпра пиççе çитнĕ, анчах та унта ака ĕçне пуçăнман — «тăпра ĕлкĕрменха», тесе лăпланса ларассĕ.

Кашни колхозрах Калинин облаçĕнчи, Краснохолмски районри «Красный путиловец» колхоз членĕсем чĕнсе каланине сӳтсе явнă, вăйлă тырпул туса илес пирки сĕнĕ обязательствăсем илнĕ.

«Броневик» колхоз членĕсем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кашни гектартан 15 центнертан кая мар тĕштырă, 110 центнер çĕрулми, 200 центнер пахча-çимĕç, 20 центнер махорка туса илме обязательство илчĕç.

Çак обязательствăсене пурнăçлас тесен, çĕре вăйлă çемçетмеллине колхозниксем лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа та уя 10.000 лав тислĕк кăларнă, çурхи калчасене апат пама 120 центнер кĕл, 80 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Халĕ колхозниксем кунĕн-çĕрĕн хирте ĕçлеççĕ. Çураки ĕçĕнче ĕçлекенсене обществăллă столовăйра кунне 3 хутчен çитереççĕ.

Колхозра массăллă-ăнлантарулă ĕçе анлăн туса пыраççĕ. Агитаторсем колхозниксене хаçатсенчи статьясемпе паллаштараççĕ, стена хаçатсемпе боевой листоксем кăлараççĕ.

Ф. РОМАНОВ.

Пур колхозсем те çуракине тухрĕç

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Районри колхозсенче çураки ĕçĕсем сарăлсах пыраççĕ. Апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне районĕпе 350 гектар ытла сухаланă, 200 гектара яхăн акнă (клеверсăр пуçне), 1.063 гектар çинчи кĕртырăрине апат панă.

Çураки ĕçĕ уйрăмах Кӳстӳмĕрти Крупскал ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Русков юлташ) анлăн сарăлса пырать. Ку колхоз акана пуринчен малтан тухнă, вăл апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне 84 гектар сухаланă, 73 гектар акнă.

Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз çĕр типсе çитеймен пирки, ака тума хăшпĕр колхозсенчен каярах юлса тухрĕ. Халь вара ака ĕçĕ хăвăрттăн сарăлса кайрĕ, колхозниксем ир пуçласа сĕм тĕттĕмччĕнех уйра ĕçлеççĕ. Колхоз 295 гектар çинчи кĕрхи калчасене апат пачĕ, 150 центнер тырра тата 45 центнер çĕрулмине яровизацилеме хучĕ.

Х. ЛИСИН.

СССР Совнаркомĕнче

1944 çулхи майăн 1-мĕшĕ—тунтикун тата майăн 2-мĕшĕ — ытларикун канмалли кунсем пулнă пирки, питĕ нумай ĕççыннисем ыйтнипе шута илсе, 1944 çулхи апрелĕн 30-мĕшне — вырсарникуна ĕçлемелли кун тесе шутлас.

Ют çĕршывсенче

Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи çыхăнусем çинчен

СССР НАРКОМИНДЕЛĔНЧЕ АПРЕЛĔН 22-МĔШĔНЧЕ ПУЛНĂ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ А. Я. ВЫШИНСКИЙ ЮЛТАШ КАЛАНИ ÇИНЧЕН ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçат редакции «Хĕсăр финсем» ятлă статьине пичетленĕ. Статьяра çапла каланă: «Совет Союзĕн мирлĕ условийĕсене сирсе ярса, финсем хăйсем йăлтах пĕтсе лариччен вăрçăран тухас шанчăкне çухатрĕç. Вырăссем пысăк условисем лартмарĕç, вĕсем нумай кĕтсе тăчĕç. Совет Правительстви хальхинчен хытăрах позици йышăнсан, вăл тĕрĕс тăвать. Финлянди пирĕн çĕршыва калама çук пысăк сиен кӳчĕ, — тенĕ Вышинский, — çав сиене Финляндии саплаламалла».

«Совет условийĕсене сирсе ярса, — тесе çырать малалла хаçат, — финсем пурнăça пĕлменнине кăтартрĕç. 1940 çулта вĕсене Россия çĕмĕрсе тăкрĕ, анчах 1941 çулта, мĕн те пулин укçасăрах илме пулмĕ-и тесе, вĕсем каллех вăрçа хутшăнчĕç. Çапла туса вĕсем хăйсен ирĕкĕпех Германин урапине кӳлĕнчĕç, вара тĕрĕссипе вассалла государство пулса тăчĕç. Халĕ, хăйсене Гитлер урăх хӳтĕлеме пултарайман вăхăтра, финсем вырăссен условийĕсене йышăнсан пуçç сĕнĕрен никама пăхăнмасăр пурăнакан халăх пулса тăма пултарассĕ (финсем хăйсен никама пăхăнманлăхĕ халь хăрушлăх умĕнче тăрать тени ухмахла калани пулать)».

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Арми энд нейви джорнал» ятлă журнал çапла çырать: Финлянди совет сен пере-мири условийĕсене йышăнманни Вашингтонра пĕртте кăмăла каймерĕ. «Финлянди правительстви Германи союзникĕ пулса юлма шут тытни паллă пулса тăчĕ ĕнтĕ, — тесе çырать журнал. — США Финляндие çавăн пек хăтланнă пирки асăрхаттарнăччĕ, анчах та Пĕрлешӳллĕ Штатсем асăрхаттарнисемпе ыйтнисене Финляндире хăлхана чикмерĕç. Германи поражени тӳснĕ хыççăн Совет Союзĕ Финляндие хальхинчен йывăртарах условисем йышăнтарасси паллах».

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ МЮНХЕНПА КАРЛСРУЭ ХУЛИСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Англии информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен питех те пысăк соединенийĕсем Германи территорийĕ çине вĕçсе кайнă. Пуринчен те хытăрах вĕсем Мюнхенпа Карлсруэ хулисене тапăннă. Малтанхи хыпарсем тăрăх, тапăну питех те вăйлă пулса иртнĕ. Унсăр пуçне, Парижран 32 километр çурçĕртерехре ларакан Шамблири чугун çул деповĕ çине бомбăсем пăрахнă. 30 самолет хăйсен базине таврăнман.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче ирхине Англи самолечĕсем Çурçĕр Францири çар объекчĕсене атакăланă.

Американецсен Европăри авиацийĕн командованийĕ çапла пĕлтерет: апрелĕн 24-мĕшĕнче кăнтăрла американецсен 9-мĕш авиаци корпусĕнчи истребительсемпе бомбардировщиксем Лувен сывăхĕнчи (Бельги) чугун çул станцийĕсене тапăннă.

Американецсен авиацийĕ паян нимĕçсен Францири аэродромĕсене тапăннă.

ГЕРМАНИН АВИАЦИ ЗАВОЧĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ ÇИНЧЕН АНГЛИПЕ АМЕРИКА ПĔРЛЕ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерствипе Америкăн Европăри сывлăш-çар вăйĕсен главнăй штабĕ пĕрле пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерӳре вĕсем Англипе Америка авиацийĕ 1943 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа тунă операцисен историне кăтартса панă. Германин авиаци завочĕсене Америка самолечĕсем чи малтанхи хут 1943 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕнче тапăннă, ун чухне вĕсем Бремен хулинчи Фокке Вульф завочĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: фронтра патрульсем кĕрешнĕ тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсем персе тăнă.

Союзниксен авиацийĕ Италин хĕвеланăç çыранĕнчи тата вăтаçĕрĕнчи тăшман объекчĕсене тапăннă, çавăн пекех тата Югославипе Албанири чугун çул сооруженийĕсем çине тата тăшманăн Эгей тинĕсĕнчи суднисем çине бомбăсем пăрахнă.

Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 51 самолетне персе ӳкернĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Италири фронтра ялан хи пекех патрульсем кăна кĕрешнĕ тата тăшмана хирĕç артиллери персе тăнă.

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ГЕРМАНИ ФРОНТĔНЧЕ НИМĔÇСЕН ТАНКОВĂЙ ÇАРĔН КОМАНДУЮЩИЙĔ ПĔТНИ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра официально çапла пĕлтернĕ: Совет Союзĕпе Германи фрончĕн кăнтăр участокĕнче нимĕçсен танковăй çарăн командующийĕ Хубе генерал-полковник пĕтнĕ.

Кĕскен

** Çак кунсенче Муссолинне вĕлерме тăнă. Муссолини фашистсен пуçлăхĕсемпе тĕл пулса калаçмашкăн хăйĕн Верона хули çывăхĕнчи дачине кайма тухнă пулнă. Дача патне çывăхарса çитсен, такам çул çине бомба вăркăнтарнă. Бомба автомобильтен 10 метр хыçаларахра çурăлса кайнă.

** Юлашки официальнăй даннăйсем тăрăх, вăрçă пуçланнăранпа США-н хĕçпăшаллă вăйĕсен 189.809 çын пĕтнĕ. Вăл шутра — 43.808 çын вилнĕ, 70.348 çын аманнă, 41.330 çын пĕр хыпарсăр çухалнă, 33.223 çын тыткăна лекнĕ.

Пирĕн государство заемĕсем

Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй аслă вăрçă расхочĕсене витме пирĕн çĕршыва укçа-тенкĕ тата пурлăхсем нумай кирлĕ. СССР Верховнăй Совечĕн Х-мĕш сессийĕ çирĕплетнĕ 1944 çулхи государство бюджечĕ тăрăх, Оборона Халăх Комиссариачĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариатне 128,4 миллиард тенкĕ укçа пама пăхнă. Çакă вăл бюджет тăрăх расходлама пăхнă пĕтĕм укçа-тенкĕ хисепĕнчен çурри ытла пулать.

Кунпа пĕрлех совет государстви халăх хуçалăхне аталантарма укçа-тенкĕ çултан çулах ытларах та ытларах уйăрса парать. Кăçалхи бюджет тăрăх халăх хуçалăхне 44,7 миллиард тенкĕ, урăхла каласан, иртнĕ çулхинчен 43,7 процент ытларах укçа хывма пăхнă. Вăл шутран 16 миллиард тенки нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсанă çĕре каймалла.

Çапла, пирĕн çĕршыв историре пулман вăрçă ĕçĕсене туса пынипе пĕрлех, халăх хуçалăхне вăйлăн аталантарса пырать. Ку ĕнтĕ социализмлă çĕршывăн хăвачĕпе тĕрекне яр-уççăн кăтартса парать.

Государство бюджетне кĕрекен тупăшсен чи пысăк пайĕ, вăрçăччен хи çулсенчи пекех, государство предприятийĕсемпе организацийĕсем хывакан тупăш пулса тăрать. Анчах бюджетăн тупăш пайĕнче хуçалăхран пухăнакан укçа-тенкĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав хисепре уйрăмах государство заемĕсене вырнаçтарнинчен пухăнакан укçа-тенкĕ паллă вырăн йышăнать.

Сталин юлташ 1926 çулта çапла кăтартса панă: «...шалти заемсене организацилес ĕç пирĕн умра тăракан задача пулса тăрать, пирĕн вăл задачăна кирек мĕнле пулсан та татса памалла».

Сталин юлташ лартнă задачăсене пурнăça кĕртнине пула, пирĕн заемсем çĕршыва индустриализацилес, халăх хуçалăхне юсаса вăйлатас ĕçе укçа-тенкĕ парса тăмалли хăватлă çăлкуç пулса тăчĕ.

Государство заемĕсем халăх хуçалăхне аталантарас ĕçĕн пур тапхăрĕнче те паллă вырăн йышăнса тăнă. Государство заемĕсен пĕтĕм историйĕ пирĕн çĕршывăн хуçалăхпа политикăллă пурнăçĕнчи паллă тапхăрсемпе таччăн çыхăнса тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ вĕсем халăх хушшинче питĕ хăвăрт сарăлаççĕ.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем государство заемĕсене çултан çулах ытларах та ытларах туяççĕ. 1927 çулта кăларнă заема 6 миллион çын 200 миллион тенкĕлĕх çырăнса илнĕ пулсан, 1938 çулта кăларнă Виççĕмĕш Пятилетка Заемне (пĕррремĕш çулхи кăларăмне) 50 миллион çын ытла 5.928 милн. тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

Уйрăмах Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче кăларнă заемсем хăвăрттăн сарăлчĕç. 1942 çулта кăларнă Военнăй Заема 13 миллиард та 186 миллион тенкĕлĕх çырăнса илнĕ. Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне 12 миллиард тенкĕлĕх кăларнă пулсан, ăна 20 миллиард та 843 миллион тенкĕлĕх сарнă.

Государство заемĕсене вырнаçтарас ĕçре пирĕн орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем те ялавах активлăн хутшăнаççĕ. Чăваш республикинче Иккĕмĕш Пятилетка Заемне (пĕррремĕш çулхи кăларăмне) 89 пин çын 8 миллион та 658 пин тенкĕлĕх çырăнса илнĕ пулсан, Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне 251.507 çын 136 миллион та 113 пин тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

1943 çулхи заем кампанийĕ нихăçанхинчен те ăнăçлăрах иртрĕ. Вăл совет халăхĕн патриотизмне лайăх кăтартрĕ, совет халăхĕ мухтавлă Хĕрлĕ Çаршăн, çĕнтерӳшĕн нимĕн те шеллеменнине палăртса пачĕ.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем заем вырнаçтарнипе пухăннă укçа-тенкĕ ăçта кайни çинчен лайăх пĕлсе тăраççĕ. Мирлĕ строительство çулĕсенче заем сарса пухнă укçа-тенкĕ халăх хуçалăхне аталантарнă çĕре, халăхăн культурипе пурнăç условийĕсене лайăхлатнă çĕре тата çĕршывăн оборона тĕрекне ӳстернĕ çĕре кайнă.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче заем сарнипе пухăннă укçа-тенкĕ хĕçпăшалсем, вăрçă техники, Хĕрлĕ Çар валли тумтирсем туса кăларассине ӳстернĕ çĕре каять. Заем сарнипе пухăннă укçа фашистла вăрă-хурахсене çĕмĕрсе тăкас ĕçхете çывхартма пулăшать. Çавăнпа та Чăваш республикинчи ĕççыннисем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, иртнĕ çул çĕнĕ заем кăларнине хавассăн кĕтсе илчĕç.

Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне кăларнă кунах пирĕн республикăри ĕççыннисем çĕнĕ заема 108 миллион тенкĕлĕх çырăнса илсе, укçине 64 миллион тенкĕ тӳлерĕç. Заем сарас тĕлĕшпе уйрăмах Калинино, Вăрнар, Елчĕк, Ишлей, Канаш, Куславкка, Комсомольски, Красноармейски, Шупашкар, Вăрмар, Чкаловски, Шăхасан районĕсем тата Шупашкар хули лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вăл районсенче заем сарнă вăхăтрах заем укçине пухассине те организацилеĕ.

Асăннă районсенчи партипе совет организацийĕсем государствăшăн çак питех те кирлĕ пысăк ĕçе кăтартуллăн ирттерме пĕтĕм вăй-хăвата хучĕç. Калинино районĕнче правительство Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне кăларни çинчен пĕлтернĕ хыççăн темиçе сехетренех районри перекет кассине заем сарни çинчен пĕлтерме тытăннă. Районри ĕççыннисем заема малтанхи кунах 3.700 пин тенкĕлĕх çырăннă, укçине 3501 пин тенкĕ хывнă. Çавăн пекех Вăрнар районĕнче заем сарас ĕçе 35 колхозра малтанхи кунах—июнĕн 4-мĕшĕнчех вĕçленĕ. Вăл колхозсем заем укçине те çийĕнчех хывнă.

Заем сарас ĕçре темиçе çĕр колхозникпе колхозница хăйсен патриотизмне кăтартса пачĕç. Красноармейски районри Чамыши колхоз председателĕ Арсентий Павлович Павлов, Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне 100.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çийĕнчех тӳленĕ. Пăрачкав районĕнчи «Красный пахарь» колхозри бригадир Иван Кузьмич Волков, 50.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тӳлесе татнă. Вăл çав заема пĕтĕмпех Тăван çĕршывăн оборона фондне панă. Калинино районĕнчи «Чăваш Коммуни» колхоз председателĕ И. П. Капитонов юлташ, 30.000 тенкĕлĕх çырăнса илсе, укçине çийĕнчех хывнă. Унăн тĕслĕхĕпе вара темиçе вунă колхозник 5—10-шар пин тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

Калинино районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозри колхозник Казаков юлташ заем кăларнă ятпа пулнă митингра сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă:

— Эпĕ 60 çулта ĕнтĕ. Манăн икĕ ывăл фронтра. Тăван çĕршыва хӳтĕлесçĕ. Манăн тивĕç—тылра тӳррĕн ĕçлесе, фронта пулăшасси. Эпĕ çĕнĕ заема 27.000 тенкĕлĕх çырăнса илетĕп. Казаков юлташ заем укçине çавăнтах хывнă. Унăн тĕслĕхĕпе нумай колхозниксем çĕнĕ заема хавасланса çырăннă. Колхозра пĕр сехет хушшинчех заема 175.000 тенкĕлĕх сарса, укçине çийĕнчех пухнă.

Предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисем те, инженерла-техникла работниксем те заем сарас ĕçре хăйсен патриотизмне палăртрĕç. Заем тухнă ятпа пулса иртнĕ митингсемпе пухусем фронтпа тыл пĕр çемье пулса тăнине кăтартса пачĕç.

Совет правительстви Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне кăларни çинчен пĕлтерсенех предприятисемпе учрежденисенче заем сарасси пысăк çĕкленӳпе сарăлса кайрĕ. Рабочисемпе служащисем заема уйăхри ĕç укçи чухлĕ е ытларах та çырăнса илчĕç. Канашри вагонсем юсакан заводри стахановец Голубев 2.000 тенкĕлĕх, стахановец Фоменко 2.500 тенкĕлĕх, Канашри пир-авăр фабрикинчи комсомолкăсем Смирновăпа Кибароглы пилĕк уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăнса илнĕ. Ун пек патриотсене çĕршерĕн, пиншерĕн илсе кăтартма пулать.

Халĕ республикăра Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемĕн облигацийĕсене салатса парас ĕç пырать. Нумай районсенче ку ĕçе те лайăх организациленĕ. Анчах хăшпĕр районсенче ситменлĕхсем те тĕл пулаççĕ-ха. Çапла, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Канаш, Куславкка, Пăрачкав тата Первомайски районсенче, заем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйсем тата перекет кассисемпе финанс органĕсенчи работниксем ĕçе сӳрĕклетнине пула, заем сарнипе пухăнмалли укçан хисепĕ чылай чакнă. Перекет кассисем тĕрĕслесе тăманнине пула, Канаш тата ытти хăшпĕр районсенче заем облигацийĕсене алла парасси вăраха тăсăлса пырать.

Перекет кассисем заем тытакансен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Нумай районсенче выляв таблицисене тĕрĕслессине организацилемен, справкăсем парассине çителĕксĕр йĕркеленĕ. Ку çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтермелле.

Совет заемĕсенче государство интересĕсемпе заем облигацийĕсене тытакансен интересĕсем таччăн çыхăнса тăраççĕ. Государство заемĕсем ĕççыннисене сахал мар тупăш пираççĕ. Вăл çакăнтан та аван курăнса тăрать: 1943 çулта кăна Чăваш республикинчи ĕççыннисем заемсем тăрăх тата укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейи тăрăх 4.670 пин тенкĕ выляв укçи илнĕ.

Пирĕн республикăра халь майăн 1-мĕшĕччен перекет кассисен ĕçĕсене пăхса тухас ĕç пырать. Çав вăхăтчен перекет кассисемпе финанс органĕсенчи работниксен Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемĕн облигацийĕсене пĕтĕмпех подписчиксене салатса памалла. Ку ĕçе финанс активне явăçтармалла.

Заем тытакансем хушшинчи ĕçе лайăх организацилес тĕлĕшпе партипе совет тата комсомол организацийĕсен перекет кассисемпе финанс работникĕсене кулленех пулăшса пырас пулать.

А. МИХАЙЛОВ,
Чăваш АССР-ĕнчи перекет кассисемпе государство кредичĕн управленийĕн начальникĕ.

Ответлă редакторăн ĕçĕсене тăваканĕ П. Н. НИКОЛАЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00602 Типография №1, Управления полигр. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.